„Канаш“ хаҫат ҫумӗнче тухат̆.

МАРТ, 1926 ҫ. 2-мӗш ҫул тухат̆.

Лайӑх та, питех те...

Йулашки вӑхӑтра наукка шухӑшласа кӑларнӑ йапаласенчен шулӗксемпе мошенниксем усӑ курма вӗренни палӑрса тӑрат̆. Нимӗн тумалли те ҫук. Пурнӑҫ ҫапла туса пырат̆. Кашни пыллӑ кашӑкрах темиҫе тумлам та пулин тикӗт йе кӑраҫҫин пулат̆-пулат̆ех. Тӑнланмаллӑрах калас тесен, пурнӑҫра ҫакӑн майлӑ йумахсем пулкалаҫҫӗ.

Ікӗ чӑваш йумахлама тытӑннӑ. Пӗри ҫуран пулнӑ, тепри лашапа.

— Лар, ҫуран кайиччен. Лартса кайӑп.

— Ларт еппин. Аҫта кайан?

— Ишеке, чиркӳ йалне.

— Ку аван.

— Аван та, ытла аванах мар ҫав. Пуп патне кайатӑп. Аттем вилчӗ. Пупӗ килте пулсан, аттене пытарма илсе килмелле.

— Вилчи? Начар.

— Начарне начар та, нумайччен асапланса выртрӗҫке. Вилсен канлӗх пулӗ.

— Ку аван.

— Аванне аван та, старике пытармаллӑх укҫа-тенкӗ ҫукҫке.

— Ку аван мар...

Тӑршӗпех ҫапла пырат̆ ҫак йумах. Кашни каламассӗренех тепӗр ҫыннин „аван“ йе „аван мар“ темелле пулат̆.

Пирӗн хаччи пурӑнӑҫра та ҫав майлӑ йапаласем сиксе тухаҫҫӗ.

Хуласенчи ҫуртсене йунӗ хакпах телефон кӳртсе параҫҫӗ. Аван.

Аван та, питех аванах мар ҫав.

Чипер ӗҫлесе ларас вӑхӑтах телефонпа калаҫса иртереҫҫӗ. Кунӗн-ҫӗрӗн телефон шӑнкравӗсем шанкӑртатаҫҫӗ. Телефон пралукӗ тӑрӑх, тӗрлӗрен усал сӑмахсем калама йуратакансем те пулаҫҫӗ,—кам калавине пӗлме хӗн. Калаканнисем хӑйсен хушамачӗсене пӗлтермеҫҫӗ, вӑрттӑн калаҫма йуратаҫҫӗ. Ку аван мар.

Метитсивӑ ҫултан ҫул малалла кайса пырат̆. Ку аван. Аванне аван та, анчах тухтӑрсем ҫав метитсивӑ ырӑлӑхне укҫалла суткалаҫҫӗ. Ку аван мар.

Пирӗн саккунсем арлӑ арӑмлӑ ҫынсене пӗр пӗринчен уйӑрлас йӗркене ҫӑмӑллатрӗҫ. Ку пит те аван. Ҫав вӑхӑтрах 7—8 ҫул хушшинче 20 шер хут авланса арӑмӗсене хуса йаракансем те пулкалаҫҫӗ (Лешкас Йет. вул.). Ку аван мар. Ҫапла ҫав! Хӗвел ҫинче те тумхахсем пулаҫҫӗ-пулаҫҫех... Ытлашши тӑварлама йуратаҫҫӗҫке хӑшхӑш ҫынсем. Анчах тӑвар тӳсен вӗтелет теҫҫӗ. „Капкӑн“ киллинче нумайрах тӳсессӗн, ун пек муклашкасем вӗтелӗҫ вӗтелӗҫех тесе хамӑрӑн шурнала 2-мӗш ҫул кӑларма тытӑнтӑмӑр. Ырӑ ҫын кулмаст̆, усал ҫын кулат̆, теҫҫӗ те ваттисем, анчах кӑҫал та епӗр пӗлтӗрхи пекех кулма, култарса пыма шухӑшлатпӑр. Вулӑр! Кулӑр! Тӳрленӗр! Сыхланӑр!

Ухутара курни-илтни.

Ҭăвашсене ҭăвашла салам!

Епĕ лайăх ухутник иккенне пĕҭĕкки тĕ ватти те, лайăх пĕлет. Кирек мĕнле кайăка та тăрăнт! пĕрсе йаран та: кирек ăçтан персен те тивет çӳлти пĕлĕте. Ăмăрт кайăка тĕллесен, каҭакана ҭивретен. Тĕллетĕн пăҭăра—ленкет вăкăра. Мĕншĕн вăл апла? Ман риккошеттă çапла: тĕллетĕн кашкăр çурăмне—тивет... йал кулакне. Перетĕн хирти кушака—тытатăв растратҭăка. Вăт, мĕнле епĕ стрелок, йулташсем!

Пăшал илтĕм, вĕшле... кушака йертрĕм, тухрăм йурлă хире, кайăксене тĕрĕслеме. Иртрĕ виç тăват минут—Кĕҭкей вулăс çĕрне улпут пек пырса кĕтĕм. Пăхатăп, куçлăх тăхăнса—тилĕ пырать йăпшăнса. Тĕллерĕм—петĕм. Тилĕ кăшкăрҭĕ йаҭĕ: „Кăравул! Хĕрхен, муҭи, турă пул!" Ĕненме хĕн: хирти тилĕн çын ҭĕлхи пек ҭĕлхи пур, халаçмаллăх ăсĕ пур. Пит кулăшла, тамаша! Тинкерех (вирлĕрех) пăхрăм—тилĕ ик уралли пулнине куртăм. Пыҭĕ те ман пата, тапратрĕ йăлăнма: „епĕ—Трофим! Куçу курмастим? Çеменпе иккĕн Аскарин йатлă йала хăр вăрлама кайваҭҭĕ. Хĕрĕ пит аван çакланҭĕ. Анҭах Ҭикмеçине çитсен, хĕрĕ çуна çинҭен ӳксе йулса хăтăлҭĕ йалалла тарса" терĕ мана ҭесҭ парса.

Лаҭ сургăм. Малалла утрăм.

Хĕрлĕ--Ҭутай вулăсне пыгăм, упа тĕлне култăм. Пăшал тăрăс тутарҭĕ, упи кăшкăрҭĕ йаҭĕ: Хурах, çăлăрах! Пуђăсене пăрçа пек хыпма мана тăрна терĕни мĕн хăвăн ăсупа? Пăхатăп: ман упа—Шуђу йалĕнҭи Енгри Тимуххи пулнă мĕв! Хăй, мĕскĕн, ҭăркуççи çиве тăрса тархаслать çав йăлăнса: „йар мана, ырă çын, епĕ хăльӈ пулма пăрахатăп. Шывпа краççын хутăштармăп, правасăр маххорккă сутмăп, тавар хакне хăпартмăп".

Куçĕнҭен лаҭ сургăм та, вĕçтертĕм Шăмата.

Лутра—Пакăш тĕлĕнҭе икĕ вакша йуртаççĕ, еп пынине курмаççĕ. Тĕллерĕм—перес терĕм, иккĕн харăс çухăрса йаҭĕç: «ой-ой, распой!» Каллех пăхатăп—икĕ çынна куратăп. Ман ума пырса тăҭĕç, çĕлĕкĕсене илҭĕç, хăйсемпе палаштарҭĕç: «епĕ Танила Унтри, ку Раман Петри. 6 тенкĕ те ҭетвĕрт сăмакункăшăн йал тарăх пĕр çухрăм кађђă-мађђă çарамас, çара уран ҭупса çӳрерĕ Раман Петĕрĕ манпа тав-



лашса. Капла урăх аташса çӳремĕпĕр малалла. Кув çинҭен а-ан кала йут çынна. Каламасан сана куçшу пек тасине „ĕçтерĕпĕр ҭетвĕртне".

Шăршласа пăхрăм та çынĕсене сăмса шăтăкĕсемпе—ерех шăрши перет. Хăсас килет. Тфу, терĕм те, вĕçтертĕм килелле.

Тепĕр вырсарнире хамăр респуплĕк-

ЙАЛСЕНЂИ ПАПУШКĂСЕМ.

Ђăваш республĕк тулашĕнђи ђăвашсем! Есĕр „Капкăн“ валђи çырусем çырмастăр-çке.

„Капкăна“ вулама йурататтăр та, анђах ăна çырăнса илесси çинђен пурте шухăшламастăр.

Çырăр!. В,лăр! Кулăр! Кулăшлă шурнал пирĕн пĕрре кăна.

Халиђен, епĕ 50 çултан иртсе кайнă пулин те, ађа çуратас йĕрке çинђен нимĕн те пĕлмен, илтмен, мĕншĕн тесен епĕ, арçын пулнă пирки, халиђен ађа-пăђа çуратса курман, папушкă ту-(а мана ађа çуратнă çĕре илсе кайаканнисем те пулмарĕç. Çавăнпа епĕ Кив-Ейпеçри *) Кăрис Микулин иртнĕ каç ађа тума аптăранă арăмĕ мĕн пирки ир пуçласа каçђенех ађа тăвайманни çинђен тĕрĕссипе калама пултараймастăп: те ађи çут тĕнђене тухмаллăх ситĕнсе çитеймен пулнă, те тата çав ађан амĕш хырăмĕнђен тухас кăмăлĕ пулман çав вăхăтра?

Килĕнђи етеммисем ăнтан кайнă. Мĕншĕнха ирхине аптăранă арăм каçђенех ађа тăваймасĭ? Иртенпех Ейпеç урамĕ тăрăх çамрăк арăмсемпе кăвак çӳçлĕ карђăксем Кăрис Микулин кивĕ пӳртне хашкаса ђупса кĕреççĕ. Пĕтĕм хĕрарăм ăнтан кайнă. Мĕн пулнă Марђене? Вилме пуçламанни? Ейпеç карђăкĕсем çӳре-çӳре урамри йура такăрлатрĕç. Аппаланаççĕ, аппаланаççĕ—ађа çав-çавах çуралса тухасшăн мар, карђăксем кускаласа çӳренине аса та илмест. Пулаççĕ çав амĕш варĕнђех кутăнланма вĕреннĕ ађасем! Тахăшин пуçĕ шухăшласа кăларнипе, тытăнђĕç карђăкĕ пуçĕнђи пыйтăсене пуçтарма. Ак-ак, пулђĕ! Ăçтаха шывпа хутăштарса ĕçтерес, тесе çӳрет Тенис карђăкĕ.

Ĕçтерђĕç те, Марђи йăшăл-йăшăл тăва пуçларĕ.

—Ак, ак, хускалђĕ, ан шавлăр, такçанах çапла кирлĕ, теççĕ.

Капла та ĕç тухмарĕ, ађи пурпĕрех тухасшăн мар.

Мĕн пулђĕ?

—Кӳрĕрка, виђкĕнрех çĕçĕ, унăн, ађа çуратаканни кĕçĕн иккен, пăртак уçса йарас, тет Ејеш карђăкĕ.

Унта пуçтарăннă хĕрарăмсем вăрçма-йатлама тытăнђĕç çапла тума хушнăшăн хайхи карђăка.

Епеш карђăкĕ тума хушнă пек те турĕç вара, те тумарĕç—курăймарăм (вăл вăхăтра манăн тула тухса кĕмелле пулђĕ).

Нумай асапланђĕç.

Ађа çуратса курнă арăмсем çавăнтах кускаласа çӳрекен Кăрис Микулине те йатласа илеççĕ.

—Ех, аçа йăтă, хăйне çураттарасђĕ! Курĕђђĕ мĕнле канлине. Кушак çуралнă пекех çăмăл теççĕ пуђ ађа çуратасси.

— Ђăнах та ĕнтĕ вăл, кушакăн пек мар, пит йăвăр пирĕн ĕç, тет вăрăмăн сывласа çамрăкрах арăм

Марђе каçђенех çапла асапланђĕ. Епеш карђăкĕсем темĕн ђухлĕ шавласан та, ађа амĕш хырăмĕнђен тухаймарĕ.

* *
*

Хĕвел анас умĕн хайхи Марђе хырăмĕнђи ађа кушак майуклатнă пек çухăрса Ђăваш республĕкĕнђе пĕр çын хушăнни çинђен пухăннă карђăксене ырă хыпар пĕлтерђĕ.

Вăл ырă хыпар çинђен илтсен, прихутра пупăн алă тупанĕсем кĕçĕтсе илнĕ, пилĕк улт çухăмра ларакан пуђ илтсăри тухтăрсем ађа çуратакан Кивĕ-Ейпеç арăмĕсене мĕнле пуђнитса астарса илсе пырасси çинђен шухăша кайнă та, халиђенех шухăшласа лараççĕ тет пуç мимисене шĕветсе.

Ађа çуратасси вăл шур пĕремĕк çинн мар. Хама та хам ађамсене те папушкăсемпе ађа çуратма тур ан калатăр!

М. П.

[1]) Кив-Ейпеç — Кĕçĕн-Йелђĕк вулăсĕнђе (Патăрйал уйесĕ).

ра анђах мар, инçетри Самар кĕпĕрнине çитес шухăшăм пур, пурпĕрех... Ун ђухне каллех çыру йарăп. Халĕ пуç тайатăп. Сыв пулăр! Çыру йама ан манăр!

ЙАВАН МУЂИ.

Хавасланаканпа киҫем ҫын.

(Оптимиспа пеҫҫимист).

— Ҫу кунӗсем ҫывхараҫҫӗ. Пӗтӗм тӗнҫе хӗпӗртет.

— Ҫулла ҫир-ҫӗрсем тухӗҫ. Вилекенсем ҫылай пулӗҫ.

— Сиессем иртнӗ хыҫҫӑн копператтивсем аван ӗҫлеме пуҫлӗҫ.

— Килӗсене таврӑнсан сиесра каланисене мансах пырӗҫ.

— Ҫуркуннепе шӑпҫӑксем йурлама пуҫлӗҫ, ҫеҫексем, йурату...

— Кӗркунне аҫу-а тӑрантармалӑх укҫуна хатӗрлесе хур.

— Уйсенҫе ӗҫлеме пуҫлӗҫ, хӗвелпе пиҫсе кайнӑ ӳтсем... Пур ҫӗрте те таса сывлӑш.

— Ерех шӑрши перет.

— Выҫӑхсем уйра ҫӳрӗҫ. Хӗвел пӗҫерҫӗ.

— Ӗнесем нӑрӑпа ҫупма пуҫлӗҫ, сыснасем вилӗҫ.

— Аҫасем хавасланса выҫаса ҫӳрӗҫ. Ҫу ҫитсессӗн пурнӑҫ ҫитет вара вӗсен.

— Ашкӑнса ҫӳрекенсем нумайланӗҫ.

— Атӑл тӑрӑх пракутсем ишсе ҫӳрӗҫ.

— Укҫасӑр лартса каймӗҫ.

— Ҫуркунне ҫинҫен шухӑшласан кӑмӑл хуҫӑлать. Ҫун лӑпланать. Ҫуркунне хӑйпе пӗрле илсе килет...

— Сунас. И.

Йупиҫар—„Капкӑн“.

Епӗ ҫурални ҫулталӑк анҫах ҫитрӗ. Ҫапах та епӗ вырӑссен ватӑ шурналӗсемпе танлашрӑм. Сывӑ пултӑр,.. епӗ! Сывӑ пулҫӑр мана вулакансем!

Приккас тӑрӑх ӗҫлеме вӗреннӗскерсем.

Шалти ӗҫсене туса тӑракан Халӑх Комиссариаҫӗ ҫуртсем ҫинҫи йура тасатас пирки приккас кӑларнӑ.

...«вменяется в обязанность в недельный срок со дня об'явления настоящего приказа произвести очистку крыш от зимнего снега»... (Приккасран.)

Вырсарни кун ирхи апатсем хыҫҫӑн кӑнтӑрлахи кӗлле кӗме ҫансем ҫапатҫенех, айалти хваттерте пурӑнакан харсӑр Йӑван ҫӳлти етташри Ӗнтӗрке Ваҫлийӗ патне пырса кӗҫӗ... Васканипе аллинҫи йӑвӑҫ кӗреҫине те Ваҫли сывӑракан кровать патнех илсе кӗҫӗ...

— Ваҫҫили Петровиҫ!.. Нумай сывӑрса выртатӑн ҫке... Тӑр ха, тӑр ҫасрах, сроҫнӑ тумалли ӗҫсем сиксе тухрӗҫ... Приккас пур!..

Ӗнтӗрке Ваҫлийӗ, хаҫ кӑна хӑрушӑ тӗлӗк курса выртаканскер,—шартах сиксе тӑҫӗ те:

— Ҫӑнахах еп вилӗ им вара? Шӑтӑк ҫакалама кайатӑн-и мӗн?..—

— Ан ухмахлан-ха есӗ, Ваҫҫили Петровҫӑ!.. Вилме параҫҫӗ и хаҫхи кунсенҫе? Ав, вуласа пӑхха ерне кун тухнӑ «Канаша», унта пӗр пит хӑрушӑ приккас пур. Хаҫ пайан, вырсарни кун; приккас тухни икӗ кун иртрӗ, епӗ хам та курман пулӑттӑм приккасне те, хамӑран курйер кӑтартрӗ. Аҫа —хӑпӑл-хапӑл тӑхӑн ҫасрах, пӳрт тӑррине улӑхса кайар, унта йур пур тети-мӗн те, ҫавна хырса антарса, урам тӑрӑх сапаламалла, тет. Срукӗ вӗт кӗске—пӗр ерне кӑна...

Унтах Харсӑр Йӑванӗпе Ӗнтӗрке Ваҫҫилийӗ, тумтир мӗн тӑхӑнмасӑрах,

Капкăн хуçи ту çинҫе.

(Матфей. V, 1-17 çт.)

Капкăн хуçи халăха курсан ту çине улăхса ларнă, ларсассăн ун патне кореспотентсем пынă. Вăл вара çăвар уçса ак çапла каласа вĕрентнĕ вĕсене:

Пуйансем хыççăн кайманнисем телейлĕ: вĕсен пурăнăçĕ йусавĕ.

«Капкăна» çакланманнисем телейлĕ: вĕсем çынсен кăмăлне кайĕç.

Ӳкĕнсе йĕрекенсем телейлĕ: вĕсене «Капкăн хуçи каçарĕ.

Револуцишĕн тăрăшакансем телейлĕ: вĕсене çĕр тивĕ.

„Капкăн“ илекенсем телейлĕ: вĕсем савăнĕç.

Тӳрĕ ĕçлесе пурăнакансем телейлĕ: вĕсене хĕрлĕ хăма çине кӳртĕç.

Ҫухăна хĕрхенекенсем телейлĕ: вĕсене Совет влаçĕ хĕрхенĕ.

Капкăн ваҫҫи çыракансем телейлĕ; вĕсем Капкăн хуçине курĕç.

Иал хушшинҫи ирсĕрлĕхсем çинҫен çыракансем телейлĕ: вĕсене Капкăн аҫисем тесе калĕç.

Кореспотент пулнă пирки асапланакансем телейлĕ: вĕсене прокураттурă сыхласа тăрĕ.

Сире ман пирки хĕсĕрлесен тĕрлĕ усал сăмахпа хăртсассăн, есĕр ан хăрăр. Савăнăр, хĕпĕртенĕр: сире паллă кореспотент тесе шутлĕç; револуционерсене те ĕлĕк çапла хĕсĕрленĕ, тенĕ.

Пирĕн ухутниксем.

Тăвата уралла „ухутниксем“ пит аван ĕçлесе пыраççĕ.

Ик ураллисем мулкаҫсенҫен хăраççĕ.

Капкăн хуçи çак сăмахсене каласа пĕтерсен, халăх вăл вĕрентнинҫен тĕлĕннĕ.

Унтан вара вăл ту çинҫен анса ретаксине кайнă. Мĕн пур халăх ун хыççăн пынă. Ретакси кантурне çитсен пурге укçа хутаççисене кăларса пĕрер „Капкăн“ çырăнса илнĕ.

тулалла тухса уткăнаççĕ. Харсăр Иăванĕ кĕреçине те Ĕнтĕрке Ваçли хваттернех манса хăварнă. Хăпарса кайрĕç хайхискерсем пӳрт тăррине... Хыпаланнипе хашкăлтатса ӳкрĕç унтах иккĕшĕ те. Кăшт тăрсан Ĕнтĕрке Ваçлийĕ пуçне хăпартса пăхрĕ те, икĕ хутлă çурт тăррин҄е выртнине курсан, хăрасах кайрĕ:

— Мĕн туса выртатпăр-ха епĕр кунта?.. Тĕлĕк курмастăп-ши епĕ ҫăнах та?—тесе харсăр Иăвана аллинҫен çавăрса илҫĕ.

Унтан иккĕшĕ нумайҫҫен ларса та, мĕн тума хăпарнине аса илеймерĕç...

—Приккас... Приккас пурҫҫĕ... „Канашне“ манса хăварни пĕтерҫĕ!—Темĕнле приккасҫĕ вăл, татах манса кайрăм—тесе пӳрнисене çамки çумне тытса нумайҫҫен ларҫĕ Харсăр Иăван.

Унҫен те пулмарĕ, айалтан сасă илтĕнсе кайрĕ:

— Ваççили Петровҫҫă!.. Мĕн ĕçпе есĕ вырăн çинҫен тăнă тăманах пӳрт тăррине улăхса кайрăн... Кĕр пӳртелле, апат çийес пулаť!..

— Итле-ха, итле-ха, Крахвине! Приккас пур-и унта? Пире кунтан анма хушакан приккас пур-и?

— Мĕн приккасĕ кирлĕ унта сана? Ухмаха йермен пулĕ çке?..

— Ухмаха мар!.. Приккас пурҫҫĕ... Кунта, пӳрт тăррине хăпарма хушакан приккас-ҫĕ...

Шупашкарти ҫиркӳсен ҫанĕсем йантраттарма тытăнҫĕç... Хула çинелле çӳлĕ крышшă çинҫен пăхсан, хула ытла та илемлĕ пек туйăнаť Харсăр Иăванпа Ĕнтĕрке Ваçлишĕн.

Çук, ку самана ырра сиссе мар пуҫ... Ĕнтĕрке Ваçли арăмĕ пĕпĕмпех хытса çунса ӳкрĕ упăшкинҫен... Ухмахах

Комсомол «лару-тăрăвĕсем».

Комсомолта тăракансем нимле ĕç те тумаççĕ темелле мар. Вĕсем мĕн ĕç пулсан та тăваççех. Хăшĕсем халăх хушшинҫе ытла та хĕрсе „ĕçлеççĕ“. Хĕрсе «ĕçлекенсене» кирек ăçта та мухтаççĕ, епĕр те кунта вăл комсомолĕссене «Капкăн» урлă „мухтăпăр“. Тивĕçлĕ çынсене «мухтасан» та çылăх пулмĕ.

—Вăрманкас Шетмĕре (Упи вул). комсомолĕс Антун Васкки пур. Халĕ хĕрарăмсем хушшинҫе «ĕçлет». Пĕр тăлăх карҫăка ҫӳреҫе витĕр ҫулпа пĕрсе хăварнă, анҫах карҫăкне тивертей мен, тĕлleме маçтăрах мар иккен.

—«Туххăм патăт не путу»—тивмерĕ тĕк—ан тивтĕр, тесе шутланă та, çав вăхăтрах хĕрарăмсем мунҫа кĕнĕ çĕре ҫупса кайса пĕр хĕрарăмне çурăмĕнҫен тикĕтпе вараласа хума ĕлкĕрнĕ, ыгтисем мунҫана тарса кĕмен пулсан пурне те сăрласа йанă пулĕҫҫĕ.

Куçнетсов М. (Тарăн çырмари йаҫейккă çекреттарĕ) арăмсăр аптраса çитнĕ. Арăм туйанма самăконккă аппараҫĕ те илсе килсе йухтарнă. Самăконккă пур. Арăм çурасна. Савăннипе туй тунă. Хăй «туй патши» ним пĕлмиҫҫенех ĕçнĕ. Унтан тем шухăш кĕрсе кайнă, арăм куç умĕнҫе çинҫех пĕр хĕр патне кайнă. Лешĕ кӳртмен. Маттур комсомолĕс алăка çĕмĕрсе кĕрсех хĕре ватса хунă.

—Креҫетниккăв Мишкă (Сиккасси йалĕнҫи комсомолĕс) çӳлелле хăпарса пырать. Вулком пӳровĕн ҫленне лекнĕ. Йалсене командировккăна кайма пит йуратать. Анҫах хушса йанă ĕçсем вырăнне «кирлĕрех» ĕçсене пурнăçа кӳртсе çӳрет. Çынсенҫен укçасăрах самăконккă ĕçет, намăс ĕçсем тăвать.

—Аçа çаптăрҫҫĕ кун пек комсомолĕссене!...

—Пасăк йалĕнҫи (Шемшер вул.) комсомолĕссем çĕнĕ крушок—„оҫко крушокĕ“ уçнă.—„Оҫко ‘ тайош, теççĕ. Сопранисемшĕн васкамаççĕ.

Акă ĕнтĕ „ĕçсем“. Куншăн ку комсомолĕссене çамкисенҫен намăс кĕлеми çапса йаратпăр.

ПАЙРАШ К.

Парикмахĕр патĕнҫе.

Сухал хыртарма пынă çын:—Ҫим ха, сан ку алшăлийу пит те хура-çке, тасараххи çук им санăн?

Парикмахĕр (çиленсе):

—Çак алшăлипех пайан 15 çынна шăлса йатăм, пĕри те пĕр сăмах калакан пулмарĕ. Таса мар тесе ан супĕлтет ха есĕ пĕр пĕҫҫен.

йерҫĕ ши ĕнтĕ ку?... Каллех кил хушшине ҫупса тухрĕ..

— Ан ха тархасшăн ҫасрах, ҫей ĕçкелесе, кирек ăçта каймаллисем пур...

— Ҫей ĕçме приккас пур и? Сăмаварне лартма приккас пулҫĕ-и сана? Çук пулсан, ан та хăтлан. Апат пĕçерме приккас пулмасан ан та аппалан пустуй...

Нимĕн тума аптăраса, Ĕнтĕрке Ваçли арăмĕ ҫейелĕхе пеме пăхрĕ:

— Çунса кайатпăр вĕт, хамăрăн хваттер çунма пуçларĕ, ан пошалстă, ҫасрах... тесе кăшкăрать вăл пур вăйран.

— Приккас пури пушарне сӳнтерме... Кăтарт приккасне, унтан анăп...

Темĕнле майпа, кас пулса килсен, шăнса хытма пуçласан, çын курман ҫухне, анҫĕç кусем çурт тăрринҫен.

Çавăнтан вара Ĕнтĕрке Ваçлийĕ ытла та етем палламалла марах пулса кайрĕ: ир тăрсан тӳрех:

— Приккас пури пайан саҫаттине кайма? тет. Унтан арăмĕ, саҫаттине каймасан выçах вилĕпĕр, теме тытăнсан. кăшт йăпаткаласа, ҫей ĕçме ҫĕнет. унта каллех—приккас пури ҫей ĕçме? тет.

Çавăнтан вара Ĕнтĕрке Ваçлийĕ пур ĕçре те приккас кĕтсе тăракан пулҫĕ. Вăл хăй те, приккас çук тесе, пĕр çĕре те„приккас пур-и? тесе ыйтмасăр. ура йарса пусмасть.

Çурхи хĕвел пăхнипе çуртсем тăррине йурсем, приккас пулсан та, крышшă çинҫен анаймарĕç, вĕсем унтах ирĕле ирĕле, шыв пулса анҫĕç... Анҫах Ентĕрке Ваçлийĕ ҫанахах та пăсăлса йулҫĕ. Кирек мĕн тумалла пулсан та

— Приккас пур и? тесе ыйтать.

Ҫăваш Крокотилĕ.

Ҫӑварни йӗкерҭи.

Епӗ ҫураласса йасыҭнӗксен тӗттӗм пуҫӗнҭен ҫуралса тухнӑ. Ҫавӑнпа тӗнҭере пулман Атамран та ватӑрах пулмалла епӗ.

Хырӑмра ҭасах ҫӗрсе ҫитейместӗп. Еп ҫӗрсе ҫитиҭҭен йут патшалӑхсенҭи пуршуйсем те вилсе ҫӗрсе пӗтӗҫ.

Тупӑк тӑвакансемпе туслӑ пурӑнатӑп.

Ман ҫинҭен ҫӑварни ҭухне, тата пӗр-пӗр ҫын вилсен аса илеҫҫӗ айвансем.

Епӗ пит аҭаш йапала, «йӳҫҫине» йурататӑп. Кив йӗркене йуратман пирки, ҫынсен хырӑмӗсенҭе пӑлхав кӑларатӑп.

Ерех ӗҫнипе кӗрешекенсене йуратмастӑп—вӗсем ман тӑшмансем пулаҫҫӗ, паллӑ ӗнтӗ ерехсӗр йӗкерҭӗ—ҫӑварни мар, теҫҫӗ мана йуратакан ваттисемпе ҫамрӑксем.

Епӗ хайар, ҭӑрсӑр йапала. Мана ҫинӗ хыҫҫӑн ҫынсем ҫапӑҫса пӗр-пӗрне йӗкерҭӗ тумасан, епӗ ҫиленетӗп. Лашасем мана йуратмаҫҫӗ. Лаша—выԓӑх вӑл.

Халӗ ӗнтӗ епӗ ватӑ. Иалсенҭе те, хуласенҭе те мана пӗтерес тесе, усал ҫынсем канашу туса хунӑ. Вӑйӑм пӗтме пуҫларӗ. Ҫапах та, епӗ хамӑн йулашки ӗмӗрте асӑнмаллӑх ӗҫсем тума ӗлкӗрӗп-ха. Усал тумасан ҭун тӑвӑрланса килет, ӑш варкаҫ вара. Еп вилсен пирӗн виҫиппостаҫ те пӗтсе ларӗ (епӗ, ерех, турӑ). Халӗ «ҫветтуй турӑ, ҫветтуй хӑватли, ҫветтуй тутли» тесе хӑвӑрӑн ҭерккӳсене карланкӑ патне илсе пырса йанклаттарса хурса манӑн ӳте ӑша илсе йулӑр, тетӗп анҭах.

ЙӖКЕРҬӖ И.

Ҫӗмӗрлекенсем.

— Петӳк, клехвунпа ҭӑвашла калаҫсан, ҫӗмӗрлмест пуԓ вӑл. Вырӑсла тӑрлавлӑ (лайӑххӑн) калаҫма пӗлместӗп те..

— Телефонӗ ҫӗмӗрлмест, тусӑм, ҭӑвашла калаҫнӑшӑн, ҭӑвашла высывӑҫ тусан телефон майрисем ҫӗмӗрлеҫҫӗ анҭах.

Мӑн ҫӑварни.

Ӗлӗк ҫакӑ ҫынсем пурӑнӑҫ тӑршипех мӑн ҫӑварни туса иртернӗ.



Февраԓ (револютси) ҫитсен, пуршуйсен мӑн ҫӑварнин уйавне пӑртакҫӑ ҭаварҭӗҫ.

Октӑпӗр „йӳнеҫӳсӗртерех". Вӑл февраԓти штатсене ҭакарса пӗтерҭӗ.

Пырне пула пуҫне ҫинĕ.

Нурăсри (Иетĕрне уйесĕ) Антун Михали тăнтан кайиҭҭен ĕҫет. Пĕрре ҫапла кĕҫнерни кун ĕҫме укҫа ниҫтан тупайманнипе, страхховат̆ тунă ĕвине вĕлерсе укҫа илесшĕн пулнă. Ĕнине виҫ кун пĕр ҫитермесĕр, шыв памасăр усранă та, кайран трук кăна нумай ҫитернĕ хыҫҫăн ик-виҫ витре вĕри шыв панă. Ĕни виҫ-тăватă кунтан вилсе кайнă. Кайран ĕҫсе усĕрĕлет те ҫемйисене хĕнесе пĕтерет, ҫемйисем тарса пĕтеҫҫĕ. Икĕ кунтан хăй те сасартăк вилсе кайат̆.

Шаллкă, „Капкăн“ ăна вилиҭҭен пуҫне хĕстерейменрĕ. Вăл хăй те «Капкăна» кĕрсе ўкессивҭен хăранипе вилнĕ пуҭ.

«Вăхăҭĕ ҫук».

Ваҭал-кассинҭи (Шупашкар вул.) вуламалли ҫурт пуҫлăхĕ Иакур Икунарĕ, вуламалли ҫурта ҫынсем кĕнеке-хаҫатсем вулама пырсассăн «халĕ вăхăт ҫук, кармони калас пулат̆» тесе вулама пынă ҫынсене калла хăваласа йарат̆.

Ҫынсене хăваласа йарат̆ пулсан, ăна хăйне вырăнтан хăваласа йарас пулат̆. Тек каласа лартăр купăсне.

Катаҭҭи ҭупма йуратаӄансем.

Ҫўрекен ҫырат̆: «Уĕҫтăвкомри (Ҫĕрпў вул.) куҭҭĕрсем ĕҫтăвком лашисемпе ĕҫке тухнă та ҫăварĕсене карса ахăрашса йăваланса ҫўреҫҫĕ. Пĕр ҫĕрте (Сĕлескерте) ĕҫсе тăранайманнипе тата Кăшар кассине пырса кĕҭĕҫ. Виҫҫĕшĕ вулĕҫтăвкомри ҫынсем, теприне паллаймарăмăр» тет.

Пирĕн шухăшпа сирĕн вĕсене ҫуни ҫинҭен антармасăрах „пес пересатки“ Шупашкара илсе килмеллеҭҭĕ. «Капкăн» ваҭҭи куҭҭĕр пит кирлĕ. Ухмаххаххисем те йуранă пулĕҭҭĕҫ. Ăса кўртнĕ пулăттămăр.

Ик йеннелле.

„Пирĕн йалсовет ҭленĕ (Шанҭас йалĕ, Сала вул. Шуп. у.) П. Ҭалăшев праҫниксенҭе ҭиркўре йалти хĕрсене пукса йурлаттарат̆, ҫекреттарĕ И. Миронăв псаломсем вулат̆“.

Тата претҫетаттĕлне те пупа хурсан ĕҫ кайат̆ сирĕн; анҭах вара хаҭхи поппа тийеҭукăн «Пирша трутана» кайса ҫырăнма тўрĕ килет.

Ликвитаттăр.

(Ой-кас йалĕ, Токаш. вул.)

Пирĕн йал ликвитаттăрĕ Алексей Пыкков хăй ҫырăва вĕрентекен ҫынсене питех тăрăшса вĕрентмест: «Хут̆ килĕр, хут̆ ан килĕр, мана пур пĕрех укҫа парса тăраҫҫĕ» тет вăл.

Ăна есĕ хут̆ кала, хут̆ ан кала, пур пĕрех унран йурăхлă ҫын пулас ҫук ĕнтĕ апла пулсан.

??

Кăна нимле йат пама та аптăратпăр. Акă вуласа пăхăр пире мĕн ҫыраҫҫĕ:

„Пирĕн йалта (Сухай касси, Шăхасан вул. Ҫĕрпў у.) вуламалли ҫурт пур. Пĕр каҫхине ҫынсем аван кăна вуласа ларнă вăхăтра Ҫементей Ҫтенкийĕ пырса кĕҭĕ, кĕнекесене тустарма ăхарашма тытăнҭĕ. Ман коропккă ҫук“ тесе спиҭкине (шăрпăкне) пĕр кĕнеке ҫине пусса сăтăрҭĕ те кĕнекене ҫурса йаҭĕ. Унталла пăхрĕ, кунталла пăхрĕ. Иакур Ваҫҫине курах кайрĕ. „Мĕн вулан ес? „ терĕ. „Хаҫат вулап“ терĕ леш. Ун аллинҭен „Канашне“ карт туртса илҭĕ те, кăсйине персе ҭикрĕ. Унтан вара тата Мишша Митрахванĕ патне пырса вăл ҫырса ларакан хутне ҫурса

ывӑтрӗ. Кун хыҫҫӑн упа пек ахӑрса йурласа йаҭӗ. Уҭитлӗ тухса вӑрҫа пуҫласан та ӑна хирӗҫ „санран пур пӗрех хӑрамастӑп“ тесе нумайҭен ҭарӑнмарӗ. „Капкӑна“ лекесси килнӗ пулас увӑн. Мӗн кӗтнине турӑмӑр. Халӗ пуҫӗ канҭӗ пуҭ.

Шкул мурӗ.

«Кашмаш йалӗнҭе (Шурҭа вулӑсӗ) питӗ пысӑк шкул пурҭӗ. Иртнӗ ҫулхине ӑна Куҫма ывӑлӗ вӑл шкула ман атте лартнӑ тесе хӑй ирӗкӗпе ҫӗмӗрсе пӑрахрӗ: крышшине, урай хӑмисене маҭҭа хӑмисене хӑпартрӗ, кӑмакисене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Ӗҫ сутра тесе ҫыраҫҫӗ.

Ҭарма кирлех ӑна. Пыра-пыра вӑл Шупашкар хулине ман асаттен аслашшӗ лартнӑ тесе илме тапӑнӗ.

„Хаҫат“ ҫийекен.

Пирӗн йалсовет претҫетаттӗлӗ (Илпеш, Шупашкар вул.) Совета килекен хаҫатсене никама та вулама памасӑ, илет те вара хӑй вуласа пӗтерсен ҭиҫаркка туртса йараӑ.

Ҭарас пулаӑ! Малашне те аплах пулсан, вӑл йалсоветне пыракан хутсене те ҫисе йарса тӑрӗ. Илпеш йалӗшӗн вара ӗмӗрех тӗттӗм каҫ пулса ларӗ.

Иртӗнсе кайнӑ.

Уҭйанӑвскӑри Ҭӑваш Тӗп Петакокӗк Техникумӗнҭи петакӑк В. П. Павлов. хӑй ҭӑваш пулсан та, ҭӑваш ҫырулӑхне курай маст, ӑна темӗн каласа йатлаҫаӑ.

(Ҫырурал.)

—Мӗн вӑл ҭӑваш ҫыруллӑхӗ... унпа хырӑм тӑрантарса пӗтерес пури мӗн!... „Реалисатсӑ“ теҫҫӗ тата...

„Капкӑн“ ресоҭутсийӗ: Ку петакӑк натси ыйтӑвне йӗп вӗҫӗ ҭухлӗ те пӗлмест пулмалла. Вӗренсе ҫитмен петакӑк.

Икӗ ӗҫ.

Аркасси йалӗнҭи (Йалӑм-кас. вул..) хӗр Авнӑ Сахкарӑвӑ йалсовет претҫетаттӗлӗнҭе те тӑраӑ, ҭиркӳре те йурлаӑ.

«Капкӑн» ресоҭутсийӗ: Ытла нумай ӗҫе тытӑнан. Аҥук хӗрӗм. Ытла нумай ӗҫлесе ҭирлесе те кайӑн... пӗр ӗҫӗнҭен хӑтарасах пулаӑ пуҭ сана! ..

«Ӗмӗтсӗр»

Хураскӑран (Йалӑмкас вул.) ҫыраҫҫӗ:

«Пирӗн йал претҫетаттӗлӗ кунӗн-ҫӗрӗн усӗр ҫӳрет, ӗҫне туни курӑнмасӑ; курнӑ ҫынсемпе пуринпе те хирӗҫет.» Пурте (?!) мана пӑхӑнса пурӑнмалла, епӗ пӗтӗм йала хам алӑра тытатӑп, тет вара ӳсӗрлсен.

«Пурте мана пӑхӑнса пурӑнмалла»... Пулаӑ те иккен тӗнҭере килмен-кайман, тӗлӗнсе кайӑн ҭиста! Пурӑнсан-пурӑнсан тата вӑл пӗтӗм тӗнҭене хӑй аллине ҫавӑрса илес тейӗ. Кӑларас пулаӑ ӑна ҭасрах вырӑнтан, тем курса тӑрӑн унпала. Пуҫ мимми вырӑнтан хӑпсан пӑсӑлагех вара ҫын.

Снамӗнски—паллӑ ҫын.

Мӑрат вулӗҫтӑвком ҭленӗ Ваҫҫили Снамӗнски, ханшана каҭака сӗҭӗ тесе ӗҫекенскер, вулӑса ҫынсем пырсан, ун патне пушӑ алӑпа ан та пыр. Апла пырсан сана алӑ та тытмасӑ, тӑвас ӗҫе те туса памасӑ. Пушӑ алӑпах пымасан саншӑн пӗлӗт ҫинҭен те татӑлса анма хатӗр. Виҫӗ ҫын тӑраҫҫӗ пулсан, пӗри сукна пиншаксемпе ҭаплӑ ҫын, пуйан пулсан, ӑва алӑ тытаӑ, иккӗшне, ҫӗтӗк сӑкманлисене урлӑ, сивӗ куҫпа пӑхса анҭах илет.

Снамӗнски валли упа капкӑнӗсем пур пирӗн, ахаҭ мулкаҭ капкӑнне 32 шӑлӗпе ҫӗмӗрсе те пӑрахӗ вӑл.

КАПКӐН ҬӖЛХИ.

Аслă Сутпа аслă çынсем.

— Аслă Сут вађђи темеççĕи çак пысăк çурт?

— Çапла çав Аслă Сутра йулашки вăхăтсенђе аслă çынсене ђылай айăплама пуçларĕç. Вĕсене айăпланă ђухне, курма пынă çынсем нумай пулаççĕ. Çавăнпа та Аслă Сут çуртне аслăлатмалла пулнă.



Шуйттана тытакансем.

Ку ĕç Асакасси вулăсĕнђе, Вутлан йалĕнђе пулнă.

Пĕр ђаваш патне, пӳрт кĕтессинђи хăвăл пĕрене ăшне шуйттан кĕрсе вырнаçнă (шуйтан пулмасан кам кĕрсе кайĕ ĕнтĕ унта). Кăнтăрла та, çĕрле те ӳлесе тăрать, çил çук ђухне хăй пуррине пĕлтермест, кимĕн сасă та кăлармасть. Çил-тăвăл тухсанах вара темĕн тĕрлĕ сасăпа ӳлеме пуçлать (шуйттансене вăйлă çил хуйха йертет пулмалла).

Шуйтан ђăрмантарса пĕтерет ђаваша. Кăларса йарасђĕ ку ђĕнмен хăнана, тесе шухăшлать ђаваш. Мĕн-мĕн туманши вăл çав хӳреллĕскере хăйĕн пӳрт кĕтессинђен сирпĕтсе кăларма. Пупне те илсе килсе турă шывĕ сапса пăхнă, хĕресне те хунă—пулăшмасть. Ђăрăнмасть. Тухса та каймасть. Кӳршĕри çынсем калаççĕ: шуйттанне ђĕрĕллех тытас, епĕр сана пулăшăпăр теççĕ. Ђăнах та тĕлĕнмелле йапала пулĕђђĕ ђĕрĕлле тытсан. Халиђен шуйтана ӳсĕр çынсем анђах курнă, кусем уăллах курма пултараççĕ. Кӳршĕсем тытас тесе пулăшма тухрĕç. Мăйăх, патаксем хатĕрленĕ. Пĕр çирĕм çын пӳрт кĕтесси патне пухăннă. Иккĕн мăйăх тытса пĕрене хăвăлне хупласа тăраççĕ. Тапратрĕç кăшкăрма, патакĕсемпе хăвăл пĕренене çапма. Тухмасть шуйтан. Такам аса илђĕ: хăвăл çине хĕрес хумалађђĕ, ун витĕр тухас çук шуйтан. Хĕрес хуђĕç те тапратрĕç каллех шаккама, урисемпе тапма, кăшкăрма, мăк вĕçет анђах. Йăсланинђен хăраса выђăхсем картасенђе макăрма пуçларĕç. Кĕтсе тăраççĕ айвансем шуйтан тухассине. Тӳрех мăйăх ăшне сикет тесе, кантăра та хатĕрленĕ, Иккĕн икĕ вĕçĕнђен тытса тăраççĕ. Çыхса лартатпăр, теççĕ. Нумай шаккаса тăђĕç. Пĕрик сехет хăтланђĕç пулмалла. Темме, тухмарĕ шуйтан.

Кăларайманшăн хуйхăрса саланса карĕç çынсем.

Шуйтан халĕ те унта ӳлесе ларать, тет.

КАТТĂ.

Ретаксирен. Шуйтана хăвалама комсомолĕсем пултараççĕ. Вĕсене ђĕнсе пымалла.

Столовăйра.

Апат çиме пынă çын. Ма сирĕн тирĕксем таса мар, пулă хупписем çыпăçса ларнă.

Слушăшђи. Ахалĕн есĕр епĕр пулă сутнине пĕлейместĕр. вĕт. Çавăнпа унта пулă хуппи çыпăçтарнă.

Кĕн-вĕç.

«КӖРНЕКЛӖ».

(Ерех тӑвакансенҫен кулса ҫырни).

Ерех сутти вӑйлӑланҫӗ
кӗрнеклӗ,
Сӑмакункӑ хӑватланҫӗ
йӗркеллӗ.
Хавасланса, хастарланса
кӗрнеклӗ,
Ӗҫеҫ ӑна йанклаттарса
йӗркеллӗ.
Кулакӗ те паҫӑшки те
кӗрнеклӗ
Ӗҫет ӑна елхери те
йӗркеллӗ.
Ахаҫ ҫухне паҫӑшкӑсем
кӗрнеклӗ,
Питӗ ӑшшӑн пуплешеҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Ӗҫсен вара—хӗрсе ҫитсен
кӗрнеклӗ
Сиккелеҫҫӗ арҫурилле
йӗркеллӗ.
Иашкӗрӗмсем кӑшт хӗрсессӗн
кӗрнеклӗ,
Харкашаҫҫӗ пӗр пӗрипе
йӗркеллӗ.
Хӗрӗсем те хӗрӗнкӗпе...
кӗрнеклӗ
Ытла ҫипер пуплешеҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Тепӗрисем астумасӑр
кӗрнеклӗ
Пӗҫик папак туйанаҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Иалканашсем ун вӑйӗпе
кӗрнеклӗ,
Тепӗр майлӑ ӗҫ тӑваҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Ун вӑйӗпек тепӗрисем
кӗрнеклӗ
Ҫӗҫӗпелех ҫиккелеҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Астумасӑр тепӗрисем
кӗрнеклӗ,
Сӑмсине те таттараҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Ун шӑрши те пит илемлӗ
кӗрнеклӗ
Виҫ ҫалӑшрӑн—пуҫа ҫавраҫ...
йӗркеллӗ.
Хӑш пӗрисем—ун кӑмӑлне
кӗрнеклӗ,
Йӗмсене... те сутса ӗҫеҫ
йӗркеллӗ.

Ик ӗне.

— Мӗншӗн есӗ мӑнтӑрланса кайнӑ. Епӗ нийепле те мӑнтӑрланаймастӑп.

— Мӗншӗн тесен ман кӗтӳҫӗ патраксен курсӗнҫе вӗренсе тухнӑ. Мана лайӑх пӑхаҫ.

Пур пеккине сутса ӗҫсен
кӗрнеклӗ,
Кайран ҫӳреҫ ҫапкаланса
йӗркеллӗ.
Астумасӑр теприсем
кӗрнеклӗ,
Тӑванне те пуҫтараҫҫӗ...
йӗркеллӗ.
Кун пек ҫаплӑ ӗҫсем пирки
кӗрнеклӗ,
Тӗкех сута турткалаҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Ерех лайӑк—питӗ ырӑ
кӗрнеклӗ,
Уншӑн пӗтет темҫул тырӑ
йӗркеллӗ.
Ӳссӗр пуҫпа вилме ҫзсах
кӗрнеклӗ,
Кӑкӑрпала тӑпра йӑтма
йӗркеллӗ.
Ҫак ҫуттишӗн—ун кӑмӑлӗшӗн
кӗрнеклӗ
Пур ирсӗрлӗх пуҫтаранаҫ
йӗркеллӗ.
Усал ӗҫшӗн—прокурорсем
кӗрнеклӗ,
Питӗ лайӑх йӗр йӗрлеҫҫӗ
йӗркеллӗ.
Ытла усал ӗҫ тусассӑн
кӗрнеклӗ,
Шурӑ ҫуртпа паллаштарӗҫ
йӗркеллӗ!!.

Аттай М.

ВУЛАКАНСЕН СТРАНИТСИ.

Капкӑн хуҫине.

Ватӑ муҭи, Капкӑн хуҫи,
Йепле лайӑх ҭупатни?
Хӑвӑн ырӑ машинупа
Нумай усӑ куратни?
Сан Капкӑнна аса илсен
Аҭа пекех сиккелеп,
Ҫӗнӗ нумӗр тухнӑ тесен:
Поҭтӑ патнех вӗҫтереп.
Мӗнле мурле есӗ унпа
Пӗр паҭӑшка ҫаклатнӑ,
Пирӗн йалти куштана та
Сӑмса тӑрӑх пӑхтарнӑ.
Ҫав вӑхӑтрах, вӑл Капкӑнпах
Иумӑҫа та хӗстернӗ,
«Трахим» йатлӑ пӑсӑк куҫа
Пӳрсем виттӗр пӑхтарнӑ.
Ват(ӑ) пӑшӑлти карҭӑксене
Ӗнсе урлӑ пӗҫертнӗ.
Кахалланнӑ йалканашне
Ыйӑхӑнҭен вӗҫтернӗ.
Лартха каллех хай Капкӑна
Епӗ ӗҫе тытӑнап,
Сан Капкӑнпа ҫатлаттарма
Пуршуйсене хӑвалап.
Ку пуршуйсем пит ҭаплисем
Ҫӗрпӳ хули панҭисем,
Етем йуҭпе пуйнӑскерсем
Миԓуҫ Макҫӑм таврашсем.
Мӑн ухутник Йӑван Муҭи,
Покка наҭас сывпулха
Аҫа ҫапман—ҭӗлӗм сӳнҭӗ
Вӑр вар ҭӗртсе туртамха!

АТТАЙ М.

„Паттӑрла выԓаҫҫӗ“.

„Пурӑнсан пурӑнсан ҫанталӑк та улшӑнаҭ“ теҫҫӗ ваттисем. Ҫавна пурнӑҫа кӳртес тесе Ҫӗмӗртлӗх йаҭҭейкки те хӑйӗн тӗсне улӑштарҭӗ. Ҫӗнӗрен политкурс вырӑнне „паттӑрла фискуԓттурӑ“ турӗҫ. Фискуԓттурӑ пуҫлӑхӗ Ҭӗкеҫ Елексийӗ хайех суйланҭӗ. Ку пуҫлӑх вара ӗҫе малтанах туйа кайса ӗҫсе ӗсӗрлсе килҭӗ те, Шепи арӑмӗн хӗрне тути-сӑварне ҫапса салатрӗ, ҫӗрле кантӑкне ҫапса ҫӗмӗрсе хуҭӗ, йаҭҭейккӑ ҫекретарне пӑшатанпа тирме тапӑнҭӗ.

Ӑна курса Микки Петӗрӗ те вӑйлӑ пуласшӑн урамра иртсе кайакан икӗ хӗрарӑма хӗнесе тӑкрӗ. Пӗр кашӑк тивӗг пӗтӗм катка пыла пӑсаҭ, тенӗ пек йаҭҭейккӑри ҭленсем пурте ҫав „фискуԓттурӑ“ ҫулӗпе кайрӗҫ. „Капкӑн“, усӑллӑ пек туйӑнаҭи ҫак фискуԓттурӑ?

Капкӑнран. Усӑллӑ мар. Мӗн пустуйа калаҫатӑн! Вӑрттӑн куҫ.

Йакку кашкӑр тытни.

Пӗрре ҫӗрле сывӑрнӑ ҭухне Иакку каҭаки питӗ хытӑ ҫухӑрма тытӑнаҭ. Арӑмӗ ӑна илтет те: Йакку! Иакку!... Каҭакана кашкӑр тытаҭ, тет. Иакку сиксе тӑрса кӑпӑр капӑр тумланаҭ те алӑк патӗнҭи пӑтаран илсе ҭупса тухса каҭакана гӑпаҭӑпа йара параҭ. Каҭаки ме-е-е-к! тесе хытӑ ҫухӑрса йараҭ те, сасси те пӗтет. Иакку хӑрасарах пӗшкӗнсе пӑхаҭ те, каҭаки мӑйракисемпе кутлӑхран ҫакланса пӑтари хӑмӑтне сӗтӗрсе антарнӑ та ӗҫӗрнеймесӗр пӗтӗм вӑйран ҫухӑрса сӗтӗрсе ҫӳренӗ. Акӑ кашкӑр тытрӑм!... тет те ҫаврӑнса кӗрет.

Арӑмӗ: ҭӑнах кашкӑр-и, Йакку? тет.

Иакку: И и! шуйтан!. Каҭакана вӗлерттертӗн?—тесе каҭакинҭен те хытӑ кӑшкӑрса йаҭӗ.

Шелепи.

Хып-хып.

Кантӑр шӑмми шарт-шарт,
Арпус-арпус лӑп-лап,
Ҫӑкӑр ҭусти леп-леп,
Урай хӑми лӑк лак,
Пуйан Ваҫук пуй-пуй,
Пур ҫынна та суй-суй.
Ӑна «Капкӑн» кур кур
Тимӗр шӑлпа хып-хып.
Кулаксенҭен кул кул,
Ҭухӑнсене мул-мул,
Хӗн-хур курма хӗн-хӗн,
Ес вӗсене пӗл-пӗл.
Пупа сӳрен турт турт
Тийеҭука ҭик-ҭик,
Кушгансене хӑрт-хӑрт
Ҫӑртансене ҫӑт-ҫӑт.
Пур йала та ҫиг-ҫит,
Пур ҫынна та пул пул,
Ҭухӑнсемшӗн ес-ес
Пулатӑн ҭан тус тус.

ҬӖРӖППЕ УРАЛ.

ПĔҪĔК МЫСКАРАСЕМ.

Шкулта.

Вĕрентекен. Ваҫкка, каласа пар-ха,—ҫĕр ҫинҫе хăш тĕлте ҫăн сивĕ вырăн?

Вĕренекен. Пирĕн шкулта пуҫ.

УЛĂП.

Пухура.

— Пирĕн йалта пухура ҫăвар уҫма та памаҫҫĕ.

— Пирĕн тата апла мар, пасар тейĕн—пурте ҫăварĕсене уҫса кăшкăрса лараҫҫĕ.

Уҫрештенире.

— Есĕ, Марие Иванăвнă, ма ĕҫлемесĕрех ларатăн?

— Епĕ ĕҫ вăхăҫĕ иртсен ытлашши, ҫверхуроҫнă, ĕҫлес тетĕп. Хаҫ ĕҫлесен каҫпа ваҫҫи ĕҫ йулмасран хăратăп.

Анклири савăтра.

Ĕҫлекен (хăй йулташне): Совет Сойусĕнҫи рапоҫисем хăйсем хуҫа. Унта пурăнма пит аван, теҫҫĕ.

Савăт хуҫи: Епĕр ҫук ҫĕрте йаланах аван.

Ĕҫлекен: Епĕ те ҫапла шухăшлатăп: есĕр ҫук ҫĕрте пит аван пулĕ, тетĕп.

Таканларĕҫ.

— Мĕнле-ха ес пайан, лаша таканларăн-и?

— Таканларăм та, хама та 4 тенкĕллĕх таканларĕҫ.

— Мĕнле апла?

— Милитси сăмакункка сутнăшăн штрав илсе кайрĕ. Таканларĕ.

ХУРАҪКА.

Хатĕрленеҫҫĕ.

— Сан шухăшпа курортра мĕн тăваҫҫĕ? Мĕн тума илсе кайаҫҫĕ унта?

— Тутлă апат ҫитерме илсе кайаҫҫĕ пуҫ.

— Тата мĕн тăваҫҫĕ унта?

— Лайăх апат ҫитернĕшĕн вăйлăрах ĕҫлеттереҫҫĕ пуҫ. Ĕҫлемесен кам лайăх апат ҫитерĕ.

— Епĕ пĕлтĕр курорта Иҫйинккăна кайнăҫҫĕ те унта нимĕн те ĕҫлеттермерĕҫ.

— Апла пулсан тутлă апат ҫиме «йа рат пойту.»

Пушар трушинисем наҫар ĕҫлеҫҫĕ.

— Пур пушарсене те пушар трушинисене анҫах сӳнтерме хушсан мĕн пулĕши?

— Патшалăхăн страхховкă уҫрештенисен кассисем пушансах йулĕҫ.

Ҫăварни.

— А! Ваҫҫили Петровиҫ, мĕнле ҫăварни ернинҫе улшăнса кайнă ес! Палламалла мар.

— Еп Ваҫҫили Петровҫă марҫке, Иван Иаккăлҫă...

— Ахаҫ мар ҫав улшăнса кайнă, терĕм. Иату та улшăннă иккен.

Ҫунса кайнăскерсем.

— Пĕгĕмпех ҫунса карăмăр. Нимĕн те йулмарĕ. Аран-аран тухса тартăмăр, ҫири кĕпе-йĕмсемпе анҫах йултăмăр.

— Шеҫ, шеҫ! На сире пĕр тенкĕ.

— Тавтапуҫ сана.

— Ҫунса кайни нумай пулати?

— 25 ҫул ҫитет пуҫ ĕнтĕ.

Ҫирлĕ ҫын

Тухтăр. Акă сана емел, ăна есĕ кашни ҫур сехетрен пĕрер кашăк ĕҫ. Унсăр пуҫне тата пĕр ик стаккан сăра ĕҫме пултаратăн.

Ҫирлĕ ҫын савăнса Сăрине те кашни ҫур сехетренех ĕҫсе пымалла-и?

Пирӗн маҫари стантси.

Хапрӑк-саватлӑ хула районсенҫе сивӗ ҫирпе керешес ӗҫӗ пионерсене йертнӗ. Пионерсем сивӗ ҫир ӳпри хӗлле пурнакан вырӑнсене шыраҫҫӗ, ҫир сӑрӑлнӑ вырӑнсене сӑнаса вӗренеҫҫӗ.

(Роста 25).



Пионер: Ей, Шупашкарти маҫари стантси! Айта маҫари ӳприсене шырама. Сана вӑратма килтӗм!

Тут-тут-ту у т!

Арҫынна хӗр ҫӗнтернӗ.

Ҫӑваш хӗрӗ пит таса йапала, вӑйлӑскер, арҫын вырӗнҫе ӗҫлесе ҫӳренӗ: суха сухалавӑ, утӑ ҫулнӑ, авӑн ҫапнӑ, вӑрман каснӑ, пур ӗҫе те ӗҫлевӗ, арҫынсенҫен пӗрте йулман. Пӗре ҫапла хулана лаша сутма кайсан, лашине сутсан, шӑлнӗпе иккӗш хула урамӗпе утса пыраҫҫӗ. Пӗр ҫӗрте ҫынсем капланса тӑнине курсан, унта мӗн тӑваҫҫӗ ши? тесе. кӗсем те унта курма пыраҫҫӗ. Пӗлӗсӗн, унта пӗр ҫын ҫынсене хӑйпе кӗрешме ҫӗнет. Хӑйне ҫӗнекен ҫынна ҫирӗм пилӗк тенкӗ тӳлеме пулаҫ; ҫӗнейменнинҫен те хӑй ҫавӑн ҫухлех укҫа илесшӗн. Пӑхӑсӑн, никам та унпа кӗрешекен ҫук. Пурте вӑл темӗн тӗрлӗ вӑйлӑ тӑр тесе, кӗрешме хӑраса тӑраҫҫӗ. Ку хӗр ҫав ӗҫе пӗлсен, ыттисем кӗрешме хӑранине курсан, ҫынсем умӗнҫех:—„епӗ кӗрешетӗп", тет те 25 тенкӗ лаша сутса тунӑ укҫине ҫӗре кӑларса пӑрахаҫ. Хӑй унҫен те пулмасҫ, шӑллӗне:— „Пыр халӗ, „лешне" пӗр савӑт илсе кил, кӗрешес умӗн пӑртак ӗҫсе пӑхам" тет ерех илсе килме хушса. Лешӗ, паттӑрӗ, кӗрешме ҫӗнекенскер, ку ҫапла хӗр пуҫӗпе теветкелесе кӗрешме пулсан. хӑра йулаҫ; пӗтӗмпе хӑраса тӗсрен ӳкет.. Ун хыҫӗнҫе пӗр ҫынни, ку ҫапла хӑраса тӗсрен ӳкнине курсан, унӑн аркинҫен туртса: —хӗрпӗ ан кӗреш, ҫӗнеймесӗр унӑн айне пулсан, хӑнтан ку ҫынна култарӑн, темӗн курса тӑрӑн хур пулӑн, ан кӗреш!" тет. Ку, паттӑрӗ, ҫӑнласах та хӑраса кӗрешми те пулаҫ.

ИВ. ЙУРККИН.

Ҫпектаккӑҫсем.

Акӑ тамаша: Кипек-касси йалӗнҫен (Пӑва канттунӗ, Тутар респ.) ҫыраҫҫӗ:

«Пирӗн йал ҫынни Влатимӗр Поппов Пӑвара Вулӗҫтӑвком претҫетаттӗлӗнҫе тӑраҫ. Вӑл ӗлӗкех те ӑслах марҫҫӗ те, хаҫ вулӗҫтӑвкома ӗҫлеме кайнӑранпа тата та пӑсӑлҫӗ. Февраҫ уйӑхӗнҫе ҫапла Ваҫҫили Йаккӑвӗпе Пӑвара «ыраш ҫӑвӗ» ӗҫсе ӳсӗрӗлнӗ те йала килсен тата Ваҫҫа Йакӑнуҫ патне кӗрсе пӗр ҫетвӗрт сӑмакункка кӳпнӗ. Киле таврӑнсан иккӗш те пӗр вӑхӑтра ҫӗмӗрӗлме тытӑннӑ. Влатимӗрӗ арӑмне темпе пуҫве ҫапса шӑтарнӑ, амӑшӗ ӑна ҫарма тытӑннӑ та, вӑл ӑна тытса ҫӗклесе ҫапнӑ. Вара хӑранипе, ҫемйисем кӑна мар, пӳрте сума кӗнӗ ӗни те, сӗтне сӑвиҫҫен кӗтмесӗр, алӑк уҫӑ вӑхӑтра тухса тарнӑ. Влатимӗртен курмаллах Йаккӑвӗ те хӑй амӑшне хӗнесе куҫне кӑвакартса пӗтернӗ.

Ҫпектаккӑҫ ҫӑнахах пит аван пулнӑ. Хулари театтӑрсенҫе те ҫпектаккӑҫсем лартаҫҫӗ те, унта укҫа парсан кӑна кӑтартаҫҫӗ, кунта пӗр укҫасӑрах комети выҫаса илнӗ. Маттур иккен претҫетаттӗлӗр, хӑлӑха ҫутта кӑларасшӑн тӑрӑшаҫ. Ех! Волоҫӑ, Волоҫӑ, хӑҫан есӗ ҫын ӗретне кӗрӗн ши!

СУТ ХЫҪҪӐН.

— Ваҫук, халиҫен ес унта пулманҫӗ пулмалла. Ну, мӗнле кӗтсе илҫӗҫ сана сутра?

— Пит лайӑх. Ҫӑмӑллӑ. Малтанах лартмалли вырӑн та тупаймарӗҫ. Аранаран шыраса тупрӗҫ.

Ӳссӗр пуҫпала.

(Халӑх сӑвви майлӑскер).

Карӑм хӑнана
Ёҫрӗм ханшана,
Килтӗм сулланса
Тӑрнтӑм ҫырмана.
Тухрӑм хурланса
Пӗтӗм йурланса,
Утрӑм ухмахла
Ӳкрӗм таканса.
Утрӑм ҫулпала
Пеҫӗҫ ҫулпала,
Ҫупрӑм сукмакпа
Пеҫӗҫ тукмакпа.
Темшӗн куҫҫанса
Утрӑм малалла
Мӗн тӑвас ухмахпа
Ӳссӗр пуҫпала!

Аттай М.

Ҫӑнӑх вӑрлакана хуҫи тытнӑ.

Хуҫи. Намӑс мари сана йут хампара ҫӗмӗрсе ҫӑвӑх вӑрлама?

Вӑрри. Ирӗксӗр килмелле пулҫӗҫке. Пуйан Унисӗм ӗҫке ҫӗнҫӗ. Куҫенеҫ пӗҫерме хамӑн тулӑ ҫӑнӑх ҫук та, ҫавӑнпа килтӗм. Куҫенеҫсӗр кайсан кайри пӳртрех лартаҫҫӗ. унта.

Кӗн-вӗҫ.

Тасалӑхшӑн тӑрӑшакан.

— Мӗншӗн ес, йулташ, кӗпӳ-йӗмӳсене улӑштармасӑрах пурӑнатӑн?

— Хавасланса улӑштарӑттӑмҫӗ те, анҫах вӑл ҫӗтӗкҫатӑк хура кӗпешӗн нимӗн те парас ҫукҫке.

Намӑссӑр.

— Мӗн ҫул какай хакӗ?

— 35 пус.

— Ай, турӑ.. Намӑс ӑҫта?

— Ӑна выҫӑх пуссанах йатта пӑрахса панӑ. Акӑ, кайри пӗҫӗрен касса турттарам. Урхамах.

ӐС ПАНИ.

— Иванова (уҫрештенире ӗҫлекен). Уҫрештени пуҫлӑхӗ сана саҫаттине вӑхӑтра ҫӳременшӗн йатлаҫаҫ, тетӗн.

Нимӗн те тӑваймӑн—унӑн ирӗкӗ, сана йатлама та, ҫитменнине тата вырӑнтан кӑларса йама та пултараҫ ун-шӑн. (Хӑйӗн ҫинҫен ан шарла есӗ— унӑн тӗрлӗ саҫҫетанисем, сопранисем тата ытти ҫавӑн пеккисем ирхине те пулма пултараҫҫӗ). Сана епӗр ҫакӑн пек ӑс парасшӑн: Ирхине саҫатти пуҫланнӑ ҫухне, пуринҫен кайран пыран пулсан, каҫхине. саҫатти пӗтес умӗн, ун вырӑнне пуринҫен маларах тухса кайма тӑрӑш. Ҫапла тусан сана никам та йатлама пултараймӗ.

Сайтсӗв Кӗркурине (Тарӑн Ҫырма, Шурҫа вул) Сӑмоконккапа сут тума паттент параҫҫӗ-и? тетӗн.

Пӗлместпӗр. Хӑвӑр вулӑсри милитсипе калаҫса пӑх.

— Иортанскине (пуп). Ывӑлна ӑҫта та пулсан тӳлевсӗр вӗрентме кӗртес тетӗн пулсан хӑвӑр йал претсҫегаттӗлне ху патна ҫӗнсе хӑна ту та, ху ҫинҫен йалти ҫи ҫухӑн хресҫен (пролеттари тесен тата шанҫӑклӑрах) тесе утостоверени ил. Ҫав хутпа ывӑлна хуҫ те ӑҫти шкула та илме пултараҫҫӗ.

— Купсова. Есӗ „Капкӑн" ҫине ҫиленетӗн. Ман йата „Капкӑн" ҫине кӗртсе пӗтӗм потписҫӗксем умӗнҫе намӑслантаратӑр, тетӗн.

Потписҫӗксем сан йатна „Капкӑн" ҫинҫе ан курҫӑр тесен, мӗн ҫапӑнса тухнӑ номӗрсене пӗтӗмпех ху илсе пӗтерме тӑрӑш. Вара сан ҫинҫен „Капкӑнра" ҫапнине никам та вулаймӗ.

Хĕресле сатађă 3-мĕш №.

(Тм. Иаккăвлĕв шутласа кăларнă).

			к			
		к	к	к		
	и	и	и	с	с	
а	а	а	а	а	а	
	т	т	т	т	л	
		н	н	н		
			н			

Çак саспаллисене пĕр клеткăран тепĕр клетка улăштарса лартмалла. Улăштарса лартнă саспаллисене çӳлтен вуласан та, айалтан вуласан та пĕр пек сăмахсем тухђăр.

Ретаксирен: Çак сатађăн туппине тупакан «Капкăн» потписђĕксенђен 10-ĕне пĕрер нумĕр «Сунтал» паратпăр.

Шаратă 2-мĕш №.

Малтанхи слок—
Шывра пурнакан
Анђах (кĕскен каласан),
Иккĕмĕш пайĕпе—пуçĕпех ӗутса йаман
Йапалана калаççĕ,
Йулашкийĕ—халăхпа туман
Шыв çивђи кĕпер.
Пурне те пуçтарса вуласан
Мухтанђăксан сăмахĕ.

Ретаксирен: Шаратă тесе пайăн-пайăн шухăшласа кăлармалли кĕске йумаха калаççĕ.

Çак шаратăн туппине тупакан «Капкăн» потписђĕкĕсенђен 15-шне пĕрер кĕнеке паратпăр (кашни уйесран 2 шер çынна, респуплĕк тулашĕнђисенђен—6 çынна). Потписђĕк маррисене преми памастпăр.

Кулакансемпе кулас тийекен çынсене!

Авалхи ђăваш ваттисем калаңă: Ухмаха хăрах пӳрнене кăтартсанах кулса йарать, тенĕ. Лайăх каланă, пит тĕрĕс. Ухмах пӳрнешĕнех хĕлĕртет, кулса йарать. Ăслине пӳрнепех култараймăн. Ăслă çын уç тупанĕ çинђе ларакан пур пӳрнӳсене кăтартсан та кулас çук. Кăтартаканни вара хăй намăса йулĕ. Анђах калăпăр, ăслă çын «Канаш» кантурне (Шупашкар, Кĕçĕн-Совет урамĕ, 15) килсе çур çуллăх, йе çулталăклăх «Капкăн» илекен уйăхра 2-шĕр хут куççӳђ тухатђенех кулĕ. Вăт, вăл вара кулĕ! Вăл кулнине кура çынсен те кулас килĕ. Хытă, савăнăçлă, уçă сывлăша йанратса, ахлатсах кулĕ. Пĕтĕм ђунтан кулĕ. Мĕншĕн тесен вăл шурнал пит те мыскараллă, пӳрне кăтартсан кулнипе танлаштараймăн.

Ухмах кăна тăваймĕ, çавăнпа унăн пӳрне кăтартнипе анђах кулма тивет. Хăй айăплă. Ма вăл «Капкăн» илмест.

Ăслă çынсем вађђи „Капкăн" хакне те кăтартса парăпăр.

Уйăха—10 пус („Канашпа" пĕрле 55 пус). 6 уйăха 60 пус („Канашпа" пĕрле 3 т. 10 пус), 1 çула 1 т. 20 п. („Канашпа" пĕрле 6 тенкĕ).

Илтрĕри?

Ответ. редактор Арк. Золотов.

Чувашлит № 535 Чебоксары, Тип. „Чуваш. Книга".